КАПКĂН

№ 10. Июль. 1939-çул. „Чăваш Коммунĕ" хаçат кăларать.

Пахча вiçнĕ çĕрте

— Эсĕ, Кузьма кум, ĕретлĕрех пул-ха. Кашни вiçĕмрех хăть пĕрер авăр хăяр е пĕр купăста пуçĕ лартмалăх та пулин ытларах ыткăнтар-ха. Закускăна ху та юрататăн вĕт... Э-э?.

Шурутсем

Ялсовет пленумӗнче лараканcем пурте тарӑн шухӑша путнӑ. Председатель Долгов Кавӑрле ӗнсине те хыҫса пӑхать, сӑмси шӑтӑкне те чакаласа илчӗ, анчах шухӑшсем ҫаплах таҫталла сапаланаҫҫӗ.

— Темӗн ҫав, чиркӗве хупас тесенех тӗпсӗр авӑр пек кӑшкӑрма пуҫлӗҫ, — терӗ Широков Саватти.

— Ытла та тӗттӗм ялсем ҫав Шурутпа Нурӑс, — тет Тяпунь Энтипӗ.

Комсомолецсем пуҫарнипе, ялсовет пленумӗ чиркӗве хупма йышӑнчӗ, анчах ку ыйтӑва ялсенчи халӑхпа татмалла.

— Пите чаплӑ ӑс тупрӑм, — терӗ Тимахви, яланах шӳт тума юратаканскер.

— Мӗнле ӑс? — кӑшкӑрса ячӗҫ пурте.

— Пӗр ҫирӗм ҫын пухӑнас та, ҫӗрле кайса чиркӗве пӗтӗмпех тасатас, — терӗ Тимахви, — алӑкне яр уҫӑ хӑварас, тепӗр кунне курман илтмене перес. Пушӑ чиркӗве мур та пырас ҫук.

— Кун пек хӑтланни чиркӗве хупни мар, мӗнпур ӗҫе салатса яни пулать, — терӗ комсорг Игнатьев.

Кун хыҫҫӑн турра хытӑ кӗлтӑвакан ҫынсене шутлама пуҫларӗҫ.

— Кукша Терук обязательнӑ чиркӳшӗн тӑрать. Ӗлӗкхи ҫулсенче кашни вырсарникунах клирос ҫинче качака таки пек мекеклесе тӑратчӗ, — тет Якку Петӗрӗ.

— Уртюшке Мӗкӗти арӑмӗ, чиркӗве хупасси ҫинчен илтсен, тӳрех кравул ҫухӑрма пуҫлӗ, халех агитацине тытӑннӑ пулӗ-ха, — терӗ алӑк патӗнче ларакан Алтати.

— Мадан Яккувӗ те хирӗҫ пырӗ. Ӗлӗк вӑл чиркӳре чӑн малта тӑрса кӗлтӑватчӗ. Чиркӳре вӑл ҫурта лартманни ҫӳлти, мачча ҫинчи, саваоф кӗлетки ҫеҫ юлнӑ, пӗвӗ ҫитсен ӑна та ҫурта лартӗччӗ, — терӗ бригадир Илье.

Лупка Микули те унран кая мар. Дьяконпа иккӗшӗ авал сахал мар ӳсӗр пуҫпа ҫапкаланса ҫӳренӗ.

Список ӳсет те ӳсет. Хашӗсем чиркӳре чан ҫапнӑ, теприсем клирос ҫинче юрланӑ, теприсем кадил ҫинчи ладана чӗртсе ҫӳренӗ, теприсем иковпа ҫӳренӗ, хашӗсем пуппа, дьяконпа ӗҫкӗ-ҫикӗлле пуранӑнӑ тата ытти те.

— Ох, пулмасть пуль чиркӗве хупа си, — терӗ Энтип, тарӑнӑн сывласа.

— Ох! — терӗ Кавӑрле.

— Мӗн „охлатмалли" пур, — терӗ мыскараҫӑ Тимахви, — Уртюшке арӑмне, Мадана, Кукшана тата ытти ни вилӗ, ни чӗрӗ святойсене „тӗне кӗртесси" йывӑр ӗҫех мар вӑл.

Комсорг Игнатьев комсомол организаци планӗ ҫинчен каласа кӑтартрӗ. Ку план тӑрӑх ӗҫ пӗр эрнене ытла пымалла. Тепӗр касхине икӗ ял халӑхӗн пухӑвне туса ирттерме йышӑнчӗҫ. Парти райкомӗ сӗннипе, Игнатьев доклад тума хӑех хатӗрленнӗ.

Тепӗр касхине шкулӑн чӑн пысӑк пӳлӗмӗ пулӑ пички евӗрлӗ тулса ларчӗ. Якку, Энтип, Васили тата ытти активистсем леш „святойсен" сывӑхне ларчӗҫ, Широков юриех Кукша Терук ҫумне ларчӗ, вӑл мӗн каланине хӑлхана тӑратса итлет. Терук ҫумӗнче Шеппи Элексантӑрӗ ларать.

— Вӗсен ӑсӗпе ҫӳреме ҫук, хамӑрӑнни пек тумалла, — терӗ Терук Элексантӑра шӑппӑн.

— Вот шуйтан! — тесе шутлать Широков хӑй ӑсӗнче, — епле вӑл калаҫса ларать...

Президиум членӗсене лӑпкӑнах суйласа лартрӗҫ. Пуху председателӗ — Долгов Кавӑрле пулчӗ. Кӗтмен ҫӗртенех кун йӗркине те пӗр сӑмахсӑр ҫирӗплетрӗҫ. Игнатьевӑн пӗр сехете пынӑ докладне пухури халӑх нимӗн чӗнмесӗр итлерӗ.

— Мӗнле-ха ку, — шутлать Игнатьев, — ниушлӗ эпӗ ҫавтери чаплӑ оратор?

— Камӑн ыйтусем пур? — ыйтрӗ Долгов, хӑйӗн куҫӗсем чарах пӑхаҫҫӗ.

— Эсир чиркӗве хупса мӗн тӑвасшӑн-ха? ыйтрӗ Мадан Якку, доклад тӑвакан ҫине тинкерсе пӑхса.

Долгов ответлеме те ӗлкерейменрӗ, Широков кӑшкӑрса илчӗ:

— Сана мӗн ӗҫ, Мадан, хутте арпалӑх тӑвар, — терӗ.

— Ыра япаларан арпалӑх туса сая ярсан, кама усӑ пулӗ, — терӗ Терук ҫумӗнче ларакан Шеппи Элексантӑрӗ.

— Пӗлетпӗр сирӗн шухӑша, эсӗр такҫанах каварлашса ларатӑр, — терӗ Широков.

— Эсӗ, Сарлаки, ытлашши иртӗнсе ан калаҫ, — сӑмах тӗртсе хучӗ Кукша Терукӗ.

— Виҫерен иртмӗпӗр, Кукша, анчах сирӗн ӗҫӗр ӑнас ҫук, — ответлерӗ лешӗ.

Кукша Терукӗ майӗпен ура ҫине тӑчӗ, сӑмах пама ыйтса пуҫне тайрӗ.

— Эсир калаҫма ӗлкӗрӗр-ха, ыттисем малтан калаҫчӑр, — терӗ Долгов, ун ҫине сиввӗн пӑхса. Ку сӑмах Терука ҫилентерсе ячӗ.

— Эсӗ, Сарлаки, ытлашши сатталанса ларатӑн, а эсӗ, Кавӑрле, пуҫна пысӑка хунӑ, — терӗ вӑл. — Пирӗн калаҫма юрамасть-им? Конституцие сиртен кая мар пӗлетпер. Эсӗ те, эпӗ те калаҫма пултаратпӑр. Сарлаки ачи чиркӳрен арпалӑх тума шутлать пулсан, ун пуҫӗнче арпа ҫеҫ пулас. Акӑ эпир: Якку, Михала кум, Элексантӑр тата хунчӑкам ҫапла шутларӑмӑр...

— Пуп илсе килме-и? — кӑшкӑрчӗ Широков.

— Ан кӑшкӑр, Сарлаки... эпир ҫапла шутларӑмӑр: икӗ ял та ӳсеҫҫӗ, пухусем ирттерме пӗр ҫурт ҫук, ӑҫта килнӗ унта йӑвасӑр кайӑк пек ҫапкаланса ҫӳретпӗр. Ҫавӑнпа та ҫак нимӗн усӑсӑр ларакан чиркӳрен клуб тумалла, терӗмӗр.

— Ав мӗнле эсӗ, — терӗ Широков, ҫавӑнтах лӑпланчӗ, канлӗн сывласа ячӗ.

— Уртюшке арамĕ ăçта кайĕ? — ыйтрĕ пĕри шўтлесе.

— Мунчи тăррине хĕрес ларттăр та, кашни кун кĕлле кĕтĕр, чан кирлĕ пулсан, буфер тупса пама пулать, — терĕ Алтати.

Ваçлей Элюкĕ сăмах ыйтрĕ.

— Ку мĕн калĕ-ха? — шутларĕ Игнатьев.

— Ман шутпа шкул тумалла, — терĕ Элюк. Ачасен хисепĕ куллен ўсет. Çитес çулсенчех çĕнĕрен шкул тума тивет, клубĕ валли ахаль те вăрман илсе хунă терĕç.

— Ку та ĕненмест-çке, — терĕ Долгов. Куçĕсем йăлтăртатса тăраççĕ, — вот пыр та калаç унпала, — терĕ, Игнатьев еннелле пуçне тайса.

Пўлĕмре асар-писер тавлашу пуçланса кайрĕ.

— Шкул! — тесе кăшкăраççĕ пĕрисем.

— Клуб! — тенĕ сасăсем янраса каяççĕ.

— Чарăнăр-ха — кăшкăрать Долгов, аллинчи шăнкăравне пушар чухнехи пек шăнкăртаттарать, анчах пухăва ниепле те чарма çук. — Сăмах ун çинчен мар, чиркĕве хупасси çинчен калаçатпăр!

— Такçанах никам çўремен чиркĕве тепĕр хут хупасшăн-им эсир?

— Айтăр сасăлар! Кам чиркĕве хупас тет, аллăрсене çĕклĕр! — кăшкăрать Долгов. Пўлĕм çаплах кĕрлет.

— Клуб!

— Шкул!

Президиум членĕсем, сцена çинчен анчĕç те, пухури çынсене лăплантарса çўреççĕ. Пĕрне чаратăн, тепри кăшкăрать. Пĕр сехет кĕрленĕ хыççăн, пуху аранах лăпланчĕ. Пурте йĕп-йĕпе тара ўкнĕ. Мадан Якку çамки çинчи пăрçа пек тарне сăхман аркипе шăлать, Шеппи Элексантăрĕ шыв витрине ярса тытнă та, лаша пек ярăнтарсах ĕçет.

— Кам чиркĕве хупас тет, аллăрсене çĕклĕр!

Ырă çанталăкра, лайăх çемçетнĕ çĕр çинче шăтнă калча пек тăраççĕ аласем.

— Кам хирĕç?

— Ун пек тĕшмĕш пур-ши? — кăшкăрса ячĕ Якку.

— Çук!

Тепĕр хут сасăласа шкул тумах йышăнчĕç. Долгов клуб тума ялсовет 15 пин тенкĕ уйăрса хуни çинчен пĕлтерчĕ.

Пуху пĕтсен, Широков Кукша Терукне хуса çитрĕ те алă пачĕ.

— Каçар, Терук пичче, эпĕ сана та, Уртюшке Мĕкĕтине те, Мадан Яккуне те, тата ĕлĕк ĕненсе пурăннă ытти çынсене те чиркĕве хупассине хирĕç пырĕç тесе шухăшланă.

— Ăхă, — терĕ Терук, сухалне каçăртса.

— Каçар, Терук пичче, — ўкĕтлерĕ Широков.

— Çитĕ, çитĕ, ачам, эсĕ çамрăк-ха, эпĕ ватă... сăмах килĕшмерĕ, — терĕ хирĕç Терук пичче, — анчах пĕл святойсем тахçанах çук ĕнтĕ... эпĕ ĕлĕк единоличник, тĕттĕм çын пулнă, ним те пĕлмен, хале эпĕ колхозник, ăнлан есĕ — колхо-о-зник эпĕ!

Н. М. Волков.

Германия

Генрих Гейни)*

Рая ырласа хĕр юрланă тĕлех, ак
Чиновниксем çитрĕç нумайăн.
Кĕç ман багажа туртса илчĕç хаяррăн,
Шыраççĕ, пĕлместĕп,—тем тупасшăн.

Пурне те шăршларĕç, аркатрĕç пурне те:
Кĕпе-йĕмсене, брюкине те.
Шыраç мĕн вĕсем мăн пуянлăх, ыр чĕнтĕр,
Тытма юраман кĕнеке те.

Ухмах-айвансем! Лăпланмашкăн ыйтатăп:
Сире валли çук унта ним те.
Вăл ман пуçăмрах—кулленхи контрабанда,—
Унпа эпĕ хам та çўретĕп.

... Миме варринче ман пур пек ыр пуянлăх,
Ĕçлет вăл пулас ăрусемшĕн.
Унтах ман мерчен те, ахах та пит тулăх,—
Турра та вĕсем илĕртеççĕ.

Нумай шухăша пуçăмрах эп тытатăп,
Ăна пытармастăп сиртен эп.
Нумай кĕнеке эп пуçпах çурататăп,
Чи тупăшлă кайăк йăви пек.

Нимле сатана та тытман ун пек пурлăх,
Вăл ыр пурлăхсемсĕр тек супĕ.
Пĕр щиксĕр, ман пек хăрамасăр, хăюллăн
Çырман Гофман фон Фалерслебен.

Манпа юнашар тăракач пассажир кĕç
Мана ăнлантарчĕ пит тимлĕн:
„Кашни, пĕл—Таможен союзĕн пруссакĕ,
Чиновник тата—тепĕр тĕрлĕ.

„Чапланĕ часах,—тет,—Таможен союзĕ,
Вăл пур халăха пĕтĕçтерĕ.
Арканчăк çĕре вăл час парĕ ак усă,
Çĕршывăн чапне те ўстерĕ.

„Пире çыхăнтарĕ часах пĕрлĕхпе вăл,
Пĕр пек пурнăçпа та вăл пиллĕ.
Цензура ўсме вăй-хăват парĕ, савĕ,
Тăван пек, пурне те хĕрўллĕн .

„Ун чух пĕрпекленĕ кашнин чун-чĕри те,
Кашнин ăс-тăннех çĕкле перлĕх.
Германин çĕрне халь, кучух пур енчен те—
Шалтан та тултан—пĕрлĕх кирлĕ“.

---

*) Генрих Гейне—нимĕçсен иртнĕ ĕмĕрти революциллĕ поэчĕ. Кунта пичетленекен „Германия“ ятлă поэмăн сыпăкне В. Улянгăпа М. Ястран куçарнă.

Анкарти

Сӳпенкке Илли

Çумăр çума тытăнчĕ. Кивçурт кассине аран çитсе кĕтĕмĕр. Ял варринчи яштак, виçĕ йӳплĕ кăтра хурăн тĕлне çитсен, лашана сулахаялла пăрса Кирил тус патне кĕтĕм. Кирил тус кăмăллăн йышăнчĕ. Кирил тус арăмĕ Таюк çĕлеме тытса ларнă кĕпине сак çине хурса, пирĕн йĕпе тумтирсене кăмака çине вырнаçтарчĕ.

— Мĕнле пурăнкалатăр?—ыйтрăм унран.—Колхозра нумай ĕçлетни?

— Ан çиллен те-ха, Илле тус, эпĕ унта ĕçлеме юратмастăп. Чӳречерен кашни кунах ĕçе тухма шаккаççĕ, эпĕ итлеместĕп,—тет тус.—Колхоз ĕçĕсĕр те аван пурăнатăп. Илле, хăвах шутла, çынсем кăçал çĕрулми 70—80 пăт илчĕç, эпĕ 170 пăт илтĕм, 100 пăт улма сутса 1200 тенкĕ укçа илтĕм. Анкартинченех 21 пăт сухан, 5 пăт кантăр вăрри, 7 пăт урпа, 70 пуç купăста, 6 пăт кишĕр, 33 кĕренке хăмла туса илтĕм,—мухтанма пуçларĕ Кирил тус.

— Мĕнле вара санăн анкарти 2—3 гектар мар пулĕ-çке?—ыйтатăп тусран.

— Çук, 2—3 гектар пулсан аванччĕ те, гектар ытларах анчах çав. Кăçал çырма хĕрнелле пĕрикĕ йăран тăршшĕ тăсасшăн-ха,—терĕ вăл.

Чăнах Кирил тус мана тĕлĕнтерчĕ. Анкартийĕ уй пек. Ӳплинче икĕ çуна, алăклă сарайра трантаспа ахаль урапа, курса çӳресен-çӳресен:—ку хатĕрсемпе колхоз усă курмасть-и мĕн?—ыйтатăп тусран.

— Ай-ай, колхозшăн мар çуса сăрласа, тирпейлĕ пуçтарса лартнă вĕсене,—ответлет вăл.

Пӳртĕнче Кирил тусăн тусанпа витĕннĕ хăрăк турăшпа тутăхса, цифрăсем палăрми пулнă сехетсĕр пуçне нимех те çук. Çапла калаçкаласа ларнă хыççăн, апата лартăмăр. Сĕтел çине, апатпа пĕрле, çур литр тухса ларчĕ.

— Эпĕ вĕт пурăнас тесех пурăнатăп. Пирĕн ялсем анкарти çĕрне 2 гектара çитерсен те шарламаççĕ, терĕ.

* * *

Унтанпа çулталăк çитрĕ. Паян пирĕн Шетмĕре юнкун пуххи. Ирех лавкасем, круçелсем, артистсем халăхсене йыхăраççĕ. Эпĕ те паян хам бригадăна, правлени ирĕк панипе, ĕçе ямарăм. Пуху туччăр терĕм. Преми панă костюма пĕрремĕш хут тăхăнса тухас тесе тăраттăмччĕ, çав самантрах алăк уçăлчĕ те, Кирил тус кĕрсе тăчĕ.

— Ак телей, ăçтан çавăрăнса килме пĕлтĕн, арăму ăçта, ирт-ха малалла,—тетĕп туса.

— Ха, Илле, эсĕ ватăлма пĕлместĕн иккен, епле костюмсемпе, ăçта туянтăн?—ыйта пуçларĕ тус.

— Бригада аван ĕçленешĕн преми пачĕç,—тетĕп.

Пылпа тунă кăрчамана ĕçкелесе ларнă хушăра Мускавран Пятницкий ячĕпе тăракан хор концерт пама пуçларĕ. Манăн тус, радиона хăнăхманран пулас, шартах сикрĕ.

— Хăçан сăрлаттартăн урайна, мĕн чул патăн ку алăк пек тĕкĕре, сĕтел çиттине килтех тĕрлерĕр-и, пружинлă кроватьне 200 тенкĕ те панă пулĕ, самовар та пур тем...—вĕçĕмсĕр ыйту пама тытăнчĕ.

Ерипен ответлетĕп: патефонне 340 тенкĕ, кроватьне 210 тенкĕ парса илнĕ, коçтюмĕ—премиı, самоварне Мускава экскурсине кайсан / 140 тенкĕ парса илтĕм, пылĕ колхозăн, тесе ăнлантартăм. Кирил тусăн те тĕлĕнсе, те ĕненмесĕр уçăлнă çăварĕ хупăнмарĕ.

— Ара санăн анкарти çĕрĕ чĕрĕк гектар патнелле кăна вĕт, ăçтан тупатăн эсĕ укça?—кăшкăрса ячĕ тус.

— Анкартире мар пуянлăх, пуянлăх колхозра, ĕçкунĕнче,—тетĕп.—Карчăкпа иккĕн иртнĕ çулта 583 ĕçкунĕ турăмăр, 193 пăт тĕштырă, 76 пăт çĕрулми, 2 пăт пыл, 1542 тенкĕ укçа тата ыттине те илнĕ, тетĕп.

— Колхозранах-и? —татах ыйтрĕ тус.

— Колхозранах,—ответлетĕп.

— Ĕçкунĕпех-и?

— Ĕçкунĕпех,—тесе çирĕплететĕп.

— Эх, Илле, Илле тус, пурăнасах тесеччĕ. Анчах,—терĕ ман тус,—колхозран кăларасшăн, кил вырăнне ытлашшине туртса илчĕç. Эсĕ колхозра тăма та, колхозник правипе усă курма та тивĕçсĕр, теççĕ. Санăн арăмупа иксĕрĕн те иртнĕ çул 17 ĕçкунĕ, кăçал 4 ĕçкунĕ кăна пулнă, теççĕ, кил вырăнĕ гектар ытла, теççĕ. Ятлареç... ах, анчах...

— Эс апла эппин, апла пулсан эсĕ гектарлă кил вырăнĕнче капитализм йăви çавăрса, колхоз ĕнси çине хăпарса ларнă. О, ун пек çынпа туслă пурăнма пулмĕ!—тесе калама ĕлкĕрнĕ çĕре манăн Кирил алăкран тухса çухалчĕ.

* * *

Нумай пулмасть Кирил каллех ман пата пырса ларчĕ. Халиччен пулман хаваслăхпа мана вăл алă пачĕ. Нумай-нумай ĕçкунĕсем туни çинчен, ĕçленĕçемĕн ĕçлес килни çинчен, партипе правительствăн постановленийĕ ăна мĕнле хавхалантарни çинчен каларĕ. Юлашкинчен: „Туслă пулар ĕнтĕ каллех“ тесе хучĕ. Пулар вара, терĕм эпĕ те.

Вӑрнар поселокӗнчи кӳлӗ



— Мӗн кӑна тумаҫҫӗ-ши кунта! Кӳлли епле чӑтать-ши?

Икĕ калав

А. П. Чехов

Мăнтăрккапа ырханкка

Николаевски чугунçулĕн вокзалĕнче икĕ тус тĕлпулчĕç: пĕри мăнтăркка, тепри ырханкка. Мăнтăркки вокзал столовăйĕнчен тин çеç апатланса тухнă пулнă, унăн çулланнă тутисем пиçнĕ чие пек йăлтăртатса тăнă. Хăйĕнчен херес тата флерордание шăрши кĕнĕ. Ырханкки тин çеç вагонтан тухнă пулнă, темтепĕр çĕклемĕ çавăрса илнĕ ăна — чăматан, картонкăсем тата тĕрлĕ çыхăсем йăтнă вăл. Хăйĕнчен ветчинапа кофе шăрши кĕнĕ. Ун çурăмĕ хыçĕнчен пĕр типшĕм хĕрарăм, вăрăм янахлăскер, вăл — унăн арăмĕ, тата тăсланкă гимназист, мăч-мăч куçлăскер, вăл — унăн ывăлĕ, пăхса тăнă.

— Порфирий! — кăшкăрса ячĕ мăнтăркка, ырханккана курсан. — Эсех-и ку? Кăвакарчăнăм манăн! Миçе хĕл, миçе çу курман!..

— Батюшки! — тĕлĕнсе чĕтрерĕ ырханкка. — Миша! Ача чухнехи тусăм! Ăçтан эс сиксе тухрăн!

Туссем виçĕ хутчен чаплаттарса чуптурĕç, унтан хаваслăхпа пăчăртанса тухнă куççуллĕ куçĕсемпе пĕр-пĕрин çине шăтарас пек пăхрĕç. Иккĕшĕ те тем пекех хавхаланчĕç.

— Чунăм! — сăмах пуçларĕ ырханкка, чуптуса тата пăхса тăраннă хыççăн. — Вот кĕтмен çĕртен! Вот сюрприз! Ну юрĕ, пăх ĕнтĕ ман çине лайăххах! Мĕнле пулнă, çавăн пекех эс, красавец! Çавăн пекех ырă та черченкĕ! Ах, эс, турăçăм! Ну, мĕнле-ха эс? Пуян пурнатăн пуль? Авланнă пуль? Эпĕ арăмлă ак, куратăн... Ку манăн арăм ĕнтĕ, Луиза, Ванценбах йăхĕнчен... лютеранка... Акă ку манăн ывăлăм, Нафанаил, виççĕмĕш класри ученик. Акă, Нафаня, ку, ача чухнехи тусăм! Гимназире те пĕрлех вĕрентĕмĕр вĕт!

Нафанаил кăштах шухăшласа тăчĕ те, картусне хыврĕ.

— Гимназире те пĕрле вĕрентĕмĕр вĕт? — сăмахне малалла тăсрĕ ырханкка. — Астăватăн ĕнтĕ, епле сана виртлетчĕç? Сана шкултан панă кĕнекене пируска вĕçĕпе çунтарса шăтарнăшăн Герострат тесе виртлетчĕç, мана элеклеме юратнăшăн Эфиальт тесе виртлетчĕç... Хо-хо... Ачасем кăна пулнă çав! Ан хăра, Нафаня! Унăн умнерех пырса тăр... Ку манăн арăм ĕнтĕ, Ванценбах йăхĕнчен... лютеранка...

Нафанаил кăштах шухăшласа тăчĕ те, ашшĕ çурăмĕ хыçне пытанчĕ.

— Ну, мĕнле пурнатăн-ха, тусăм? — ыйтрĕ мăнтăркка, тусĕ çине савăнăçлă пăхса. — Вырăнта пуль? Тен хисепе те тивĕçлĕ пултăн пуль?

— Вырăнта пурнатăп, чунăм! Иккĕмĕш çул ĕнтĕ коллежски асессор пулса ĕçлетĕп, Станислав орденне тивĕçлĕ пултăм. Шалу начартарах та... ну, мур çине унпала! Арăм музыка урокĕ парать, хам тата йывăçран портсигарсем тăватăп. Çавтери лайăх портсигарсем! Кашни штукне пĕрер тенкĕпе сутатăп. Вунă штук е ытларах илекенсене йӳнĕрехе те паратăп. Пурăнкалатăп çавăн пек. Департаментра ĕçлесеччĕ, халĕ ак кунта çав ведомствăпах столоначальник пулма куçарчĕç... Малашне кунта ĕçлетĕп ĕнтĕ. Ну, эсĕ мĕнле? Тен статский те пулĕ? А?..

— Çук, тусăм, кăшт çӳлерех, — терĕ мăнтăркка. — Тайный советник ĕнтĕ эпĕ... Икĕ çăлтăр çакса çӳретĕп.

Ырханкка сăнĕ сасартăк шуралчĕ, çанçурăмĕ чулланчĕ, анчах часах унăн пичĕ çинче сарлака кулă палли çиçсе ярăмланчĕ; куçĕсенчен вут хĕлхемĕ сирпĕнсе тухнăнах туйăнчĕ. Хăй вăл кукленчĕ, курпунланчĕ, пĕрĕнчĕ... Чăматанĕ те унăн, картонкисем те, тĕрлĕ çыххисем те кукленчĕç... пĕркеленчĕç... Арăмĕн вăрăм янахĕ татах та тăсăлчĕ; Нафанаил тӳп-тӳррĕн хытса тăчĕ, хăйĕн мундирĕн пур тӳммисене те тӳммелерĕ.

— Эпĕ, ваше превосходительство... Çавтери аван-с! Ачаранпах туслă терĕмĕр пулать, а сасартăк çавăн пек вельможсене тухрăмăр! Хи-хи-с.

— Ну, юрĕ ĕнтĕ! — çамкисене пĕркелентерчĕ мăнтăркка. — Мĕне кирлĕ апла каласма? Эпир санпала ачаранпах туслă, — мĕне кирлĕ чин уйрăмлăхĕ çине пăхма!

— Каçарăр... Мĕн эсир-с... — татах та кукленерех авăнса каларĕ ырханкка. Эсир, ваше превосходительство, пурне те асăрхаса, ертсе пынипе... Хай, как калас, чăмламалли сĕткен пек... Акă ку, ваше превосходительство, манăн ывăлăм Нафаил... ку арăм, Луиза, лютеранка, хай, как калас...

Ку сăмахсене хирĕç мăнтăркка темĕскер каласшăн пулчĕ, анчах ырханкка сăнпитĕнчи тавлăх тата пăхăнаслăхăн палли тайный советнике тăвăнтарса калас сăмаха такăнтарчĕ. Вăл вара ырханккаран пăрăнчĕ те, сывпуллашас шутпа алă пачĕ.

Ырханкка унăн виçĕ пӳрнине чăмăртарĕ, пĕтĕм ӳтпĕвĕпе авăнса тайăлчĕ, китаец пек хихиклетрĕ: „хи-хи-хи“. Арăмĕ те кăштах кулчĕ. Нафанаил, урипе урине шаплаттарнă май, картусне ӳкерчĕ. Виççĕшĕ те вĕсем хавас туйăмлăхпа хавхаланчĕç.

1883.

Почта уйрăмĕнче

Çак кунсенче эпир хамăрăн ватă почтмейстер Сладкоперцевăн çап-çамрăк арăмне пытартăмăр. Çавтери илемлĕскерне çĕр айне чиксе тирпейленĕ хыççăн, эпир, ваттисен йăлипе, вилнĕ чуна „асăнма“ тесе почта уйрăмне кĕпĕрленсе кайрăмăр.

Пирĕн умма икерчĕсем кăларса лартсанах, тăлăха тăрса юлнă старик куççулĕ витĕр хурланса çакăн пек каларĕ:

— Çак икерчĕсем пекех илемлĕн йăлтăртатса тăратчĕ ман арăмăн сăнсăпачĕ. Çаксем пекех хитреччĕ! Каснă-лартнă, çаксем пекех!

— Çапла ĕнтĕ, çапла, — килĕшрĕç асăнакан-

сем, — чăнласах та питĕ хитреччĕ вăл сан арăм... Первый сортчĕ!

— Вара çав... Пурте тĕлĕнетчĕç вĕт ун çине пăхсассăн... Анчах, господасем, эпĕ ăна унăн илемĕшĕн мар юратнă, ырă кăмăлĕшĕн те мар — çак икĕ пахалăх чылай хĕрарăмсемшĕн чи кирлĕ вырăнта тăраççĕ пулин те — çук, уншăн мар ăна эп юратнă. Эпĕ ăна унăн чунĕнчи урăх пахалăхĕшĕн юратнă. Тӳп-тӳррĕн каластăк, эпĕ ăна, вилнĕскерне — тăпри çăмăл пултăр, — хăйĕн калама çук ырă та килĕшӳллĕ характерĕпе упăшкине чунтан-чĕререн тĕрĕссĕн пăхăнса пурăннăшăн юратнă. Мана вăл, ватăскерне, эпĕ вĕт часах утмăла пусатăп, вăл çирĕмре çеçчĕ — хăй çамрăкне пăхмасăрах çавтери пăхăнса пурăнатчĕ, мана никампа та улăштармастчĕ! Мана вĕт, старике, вăл пăхăннă!

Дьякон, пирĕнпе апатланса лараканскер, пăркаланса илнĕ май, ӳслĕклĕн какăрса, старикĕн сăмахĕсене ĕненес пирки хăйĕн иккĕленӳллĕ шухăшне систерчĕ.

— Эсир ĕненместĕр апла пулсассăн? — терĕ старик, ун çине пăхса.

— Ĕненес пирки мар-ха та, — терĕ дьякон, — ахаль çеç... çамрăк арăмсем кăчухне урăхларах пулаканччĕ те... Да... Çук... Н-да...

— Эсир иккĕленетĕр, апла-тăк тĕплĕнех каласа ĕнентерем. Вăл мана яланах пăхăнса тăтăр тесе эпĕ тĕрлĕ стратегилле майсемпе усă кураттăм. Тĕрлĕ майсемпе усă курма пĕлекен чее характерлă упăшкана вăл ниепле те улăштарма пултарайман. Хамăн чеелĕхпе эп унпала иксĕмĕр хушăмăрти йĕркелĕхе сыхланă. Пароль евĕрлĕ сăмахсем пĕлетĕп эпĕ. Çав сăмахсене калатăп та вара — баста, арăмпа иксĕмĕр хушăмăра тăшман кĕреймесси пирки нимĕн иккĕленмесĕр, канлĕн çеç çывăрма пултаратăп...

— Мĕнле сăмахсем-ха вара вĕсем?

— Самăй простой сăмахсемех. Хула çине эп пĕр ырă мар хыпар сарнăччĕ. Вăл хыпара эсир те пĕлетĕр. Эпĕ кашни тĕлпулаканах калаттăм: „Манăн арăм Алена хамăрăн полицеймейстер Иван Алексеич Замехватскипе пурăнать вĕт“ теттĕм. Çак сăмахсем вĕсем çителĕклĕ пулнă. Вара полицеймейстерăн хаярлăхĕнчен хăраса манăн Алена хыççăн пĕр çын та чупма пултарайман. Аленăна курсассăнах пурте ун умĕнчен тарса çухалатчĕç, Замехватски мĕн те пулин ан шухăшлатăр тесе харатчĕç. Хе-хе-хе... Вĕт çав сухаллă эреметпе çыхлан кăна — ыррăн хăтăлаймăн, санитари пирки пĕр харăссăн пилĕк протокол çырса хурĕ. Сăмахран ак, сан кушакку урамра çӳренине курчĕ-тĕк, ун çинчен вăл килçуртсăр выльăх тесе çавăнтах протокол çырса хурать.

— Апла, сирĕн арăм Иван Алексеичпа пурăнман та-и вара? — тĕлĕнсе ыйтрăмăр эпир.

— Çук-с, ку вăл ман чеелĕх... Хе-хе... Мĕнле, сире, çамрăксене, чике таранах лартнă-и мĕн эпĕ? То-то, çапла кирлĕ те...

Пĕр виçĕ минутлăха пĕри те нимĕн чĕнмерĕмĕр. Çак хулăм шăмшаклă, хĕрлĕ сăмсаллă старик хăйĕн чеелĕхĕпе лартма пултарнишĕн пире вăтанма тата кӳренме те лекрĕ.

— Юрĕ ĕнтĕ, тур парĕ-ха, тепре те авланăн! — тесе хучĕ дьякон.

1883.

М. П. куçарнă.



Автанпа кушак

(Юптару)

Ула кушак çынсем тăриччен пĕр ирпе
Хăйма çиме кăштăрт сикрĕ нӳхрепе.
Кунта пурте пур ĕнтĕ ун валли:
Çăвĕ, турăхĕ, сĕчĕ—хăймалли,
Кунтах тата тăпăрчă хутаççи,—
Хăшне кăмăлу çăвать—çавна çи!
Нӳхрепри чӳлмексем хушшинче
Пирĕн кушак çӳрет йăпшăнса,
Пӳртри çыннисем туйиччен
Тухса каясшăн тăранса.
Ав вăл хăйма çинче... пĕсмелле!
Чӳлмекки лĕштĕрех йăванчĕ,
Эх-ме, пĕç-пĕç! Тяппи варланчĕ.
Чим! Хуçине мĕскер темелле?
Мĕн пулса тăчĕ ĕнтĕ çак?!
Хăранипеле çак кушак
Тухрĕ те вĕçтерчĕ картана;
Унта вăл курчĕ те автана:
— Сăтăрçă! — тет — Мĕн турăн нӳхрепре?
— Чим, чим! — тет автан. — Мĕн пулчĕ?
Эпĕ кашта çинчеччĕ тӳпере,
Халĕ çеç-ха унтан ансаччĕ!
— Ан калаç! — тет Кушак,— намăса пĕлмелле!
Епле автан пуçпа нӳхрепе кĕмелле?
Унтан ăна тытрĕ те çунатран
Çавăтса кăна тухрĕ картаран.
Хăй шавлать, вăрçать пикенсе,
Вăрă тытрăм! — тет. — Килĕр, юлташсем!
— Мĕн пулнă та, мĕн пулнă? тесе,
Унтан та кунтан кĕрлесе
Кушак патне чупаççĕ ыттисем.
Пӳртрисем тăрса тухиччен
Киль выльăхсем часах пухăнчĕç,
Çакă ир пулнă ĕç çинчен
Ыйтса, тĕпчеме тытăнчĕç.
— Вот мĕн! — тет кушак. — Паян ирхине
Нӳхрепе кĕнĕ çак автан.
Хăйма ĕçнĕ-ĕçнĕ те, чӳлмекне
Тӳнтерсех янă хыçалтан.
Сăтăрçа уншăн ответ тыттарас,
Е карташĕнчен йăлтах хăвалас!
— Чимĕр-ха, чимĕр! терĕ Юпах Тиха, —
— Нӳхрепе çак кушак хăй аннă,
Юлташсем, пăхăр, астăвăр-ха —
Авă, урисем хăймапа варланнă!
Усал! Автана айăпласшăн, çапах та!
Пăхаççĕ — урисем хăймаллă чăнах та.
Вара тин юхнă хăймашăн кушакне
Пуху умĕнче тыттарчĕç ответне.

* * *

Элекçĕ тенине вара эс курман-и?
Вăл сирĕн хушăра та пулмалла.
Ăна паллас тесен — тяппи варланман-и?
Çавна тинкеререх пăхмалла.

Н. Евдокимов.

Кĕске калаçусем

Çĕнĕ пулăшу

— Ачу пĕлтĕрех аслă шкултан вĕренсе тухнă. Халĕ аван вырăнта ĕçлесе пурăнать. Ашшĕне пулăшкалать-и?

— Пулăшкалать. Ашшĕне тригонометри, мана алгебра задачисене тума пулăшкалать.

Çĕнĕ орфографие пĕлсе çитмен секретарь

— Сан почерку начар. Каллиграфине вĕренес пулать.

— Ой, кирлĕ мар. Ман почерк аван. Юри вулама йывăр почеркпа çыратăп эпĕ.

— Ма апла?

— Вулама çăмăл почеркпа çырсан, эпĕ çĕнĕ орфографине начар пĕлнине пурте сисме пултараççĕ.

Пуян колхозник

— Пăх-ха ăшă çилпе хумханса ларакан тырă пучахĕсем çине. Кăçал пўрт алăкне аслăлатмаллах пулать.

— Ма аслăлатасшăн-ха?

— Пўрте рояль кўртме.

Парикмахер патĕнче

— Парикмахер юлташ, эсĕ асăрхайманнипе ман хăлхам вĕçне татса илтĕн.

— Апла-тăк тепĕр енчине те касса танлаштарса ярам,—юрать-и?

Баяншăн

Ашшĕ (*вулать*): „18-мĕш ĕмĕртех пĕр паллă врач Гуфеланд çапла çырса хăварнăччĕ:“ Пĕр юлхав çын та ватăличчен пурăнман, сĕм ватта çитиччен пурăннисем—вĕсем пурте пурнăçа ĕçлесе ирттернĕ çынсем“, тенĕ.

— Апла пулсан, эсĕ, атте, сĕм ватăлса çитиччен пурăнаймастăн.

— Ма, ачам?

— Мана баян туянса пама ўркенетĕн.

Начар буфет

— Пирĕн буфетра çăвара хыпмалли япаласем çук.

— Вĕри кукăльсемпе бифштекссем-и?

— Мар. Вилкăсем.

Çăмăл илнĕ отпуск

— Отпуск илтĕн эппин. Парасшăн мар калаçмарĕç-и?

— Çук-çке. Ĕнерхи ĕçе сехет çурă юлса килтĕм те, пĕр сăмахсăрах „ячĕç“.

Мунчара

— Эсĕ мунчана килни виçĕ сехет ытла. Ма ытла нумай çăванан-ха?

— Мунчана ремонт тума уйăхлăх хупаççĕ. Уйăхлăх çăванса юлас тетĕп.

(*Юптару*)

Мĕтри мучи шăп çурçĕр тĕлĕнче
Ăш ăйăхран вăранчĕ тĕлĕнсе:
Мĕскер пирки янрать-ха чан сасси?
— Эккей вĕт-ха, пулмарĕ çыврасси!—
Тесе Мĕтри тухать урамалла.
Катаранах такам та курмалла,
Ял вĕçĕнче, пушар тухнă тĕлте,
Хĕп-хĕрлĕ çутă ўкнĕ пĕлĕте.
— Эккей вĕт-ха, пушар тухнă ялта!
Юрать-ха эп тăмастăп хуралта...
Тесе, Мĕтри каллех кĕлеткине
Кĕртсе хурать çемçе тўшек çине.
Анчах Мĕтри пуçлать „хуп турттарма“,
Пушар леш урамран ку урама,
Пĕр çурт çинчен тепĕрин çине сиксе,
Мĕтри пўрчĕ çине ўкет çитсе.
Пўрт ăшчикки лăнк тулчĕ тĕтĕмпе,
Мĕтри аптрарĕ, мĕскĕн, пĕтĕмпех.
Часрах вăл тăчĕ вырăнĕ çинчен,
Кушак çури пек кăшкăрчĕ çинçен:
— Çунса каятпăр! Пĕтрĕмĕр! Хурах!
Мĕскер капла ку? Çырлахсам турах!
Виçесĕр хăраса ўкнипеле
Чупать алăк патне те тĕпеле,
Юлашкинчен йăлт аптраса çитет,
Пуçне кăмакана пырса чикет.

* * *

Пуçланнă иккĕмĕш тĕнче вăрçи.
Анчах та Франципеле Англи тени,
Нумайччен вĕсем чăхăмлĕç-ши?
Пушарпала ав мĕн курчĕ Мĕтри,
Е эсĕр те çавна кĕтетĕр-и?

Ф. Ванин.

Куян Кулянать

Ялан саванăçлăччĕ вăл. Паянхи пухуран тем пирки вăл ытла та çиленсе таврăнчĕ. Хăй кĕнĕ хыççăн пÿрт алăкне мĕнпур вăйĕпе кĕрслеттерсе хупрĕ. Темшĕн ятлаçса илчĕ. Анчах вăл кĕне вăхăтра пÿртре никам та пулман пирки, ăна никам та хирĕç сасă памарĕ, пĕр кăмака çинче çывăрса выртакан кушак çеç ун сассипе ыйхăран вăранса ун умне сиксе анчĕ, хуçи çине пăхса йăвашрах сассипе макăрса илчĕ. Ку Куяна тата ытларах çилентерсе ячĕ.

— Мĕн кирлĕ сана?—терĕ вăл хытăн тухакан сассипе. Хăй çавăнтах кушака ярса илсе тĕрлĕ май турткала пуçларĕ.—Кала мĕн кирлĕ сана? Кунта çыннин ахаль ăш тулашать, а эсĕ пур, макăрса тата чуна тарăхтаран!—Вăл айăпсăр кушака шăпăр шăтăкнелле хытă çĕклесе çапса пахчине тухрĕ. Ним тума аптраса хуйхăллă пуçне усса пахчи тавра утса çаврăнма пуçларĕ. Анчах çав вăхăтрах сасă илтĕнсе кайни ăна пĕр вырăнта чарса тăратрĕ.

— А-а!—Энтрук пуçана иккен,—терĕ вăл сассине çемçереххĕн кăларса.

— Эпĕ-ха, эпĕ,—терĕ Энтрукĕ,—мĕн эсĕ уткаласа çÿрен?

— Уçăлса çÿрекелес терĕм.

— Ну, мĕнле, Миккуль пуçана, пухха кайса килтĕн-и?—терĕ Энтрук калаçăва малалла чĕртсе ярса,—мĕн калаçрĕç?

Çак сăмахсем Кульккана татах çилентерсе ячĕç, анчах вăл, хăй умĕнче пуçанăшĕ тăнине астуса илсен, сассине каллех çемçен кăларчĕ.

— Ара эсĕ, пуçана, пухăва ху пырайманччĕ-им?

— Килте пулайман пирки пыраймарăм çав, çавăнпа сан патна килсе пĕлес терĕм,—терĕ ăна пуçани.

—Эпĕ карăм та, анчах кайман пулсан пин хут лайăх пулатчĕ...

— Ма тата? Мĕн пулчĕ?—ыйтрĕ Энтрук тĕлĕнсе.

— Мĕн пуласси пулнă ĕнтĕ вăл,—терĕ Куян сывлăшне тулалла вĕрсе кăларса ярса,—ман çинчен каларĕç. Малтанах Карачăм Иванĕ тухса калаçрĕ, унтан Кавăрле Тарасĕ... Суя колхозник терĕç. Пахча пысăк пирки калаçрĕç. Малашне пирĕн колхоз сан пек суя членсене тÿсме пултараймасть, терĕç.

— Çук. Пуçана, эсĕ çав калаçакансем çине, йăнăш тăрăнатăн,—терĕ хирĕç Энтрук, нумай итлесе тăнă хыççăн,—вĕсем айăплă мар кунта...

— Кам тата?—терĕ Куян хăвăрттăн,—мĕнпура çавсем пуçласа ячĕç...

— Никам та мар, ху айăплă. Хăвах шутла эсĕ, пуçана, колхозра пурте ĕçлемесĕр пурăнсан, мĕн пулса тăнă пулĕччĕ пирĕн колхозсемпе?.. Кам тырă хатĕрленĕ пулĕччĕ пире валли?..

— Ку тĕрĕс мар, пурте ĕçлемесĕр пурăнаймĕç, эс уншăн ан хăра,—терĕ Куян, каллех Энтрука пÿлсе.

— Ну, сăмахран калатпăр, эсĕ ĕçлемесен, эпĕ ĕçлемесен, тепри ĕçлемесен...

— Çук, çук, сăмахран та пулма пултараймасть... Эсĕ ун çинчен мар, вот ман пахчана епле хăтарса хăварасси çинчен кала-ха!

— Пахчана... ăна хăтарса хăварма çăмăл, ĕçлес пулать колхозра, вара санăн пахчу çеç мар, пуя.i та культурлă пурнăçу та пулса тăрĕ. Ав куратăн пулĕ, ĕçлекенсем епле пурăннине. Сан та вĕсене çитме мĕнпур майсем пур вĕт,—терĕ юлашкинчен Энтрук, хытă ÿкĕтлесе.

— Ĕçлемелле тетĕн, анчах мана юрăхлă ĕç пурши унта, пуçана?

— Мĕнле ĕç кирлĕ сана?

— Мана çăмăл ĕç кирлĕ, анчах ĕçĕ çăмăл пулин те, ĕçкунĕ ытларах пултăрччĕ...

Кунта каллех вĕсен калаçу тăсăлса карĕ. Нумайччен калаçрĕç вĕсем.

Ик-виçĕ кун иртсен, колхозниксем Куян Кулькки ĕçе васканине курчĕç.

М. Аркай.

Армана кайнă чух

Сĕнтĕр шывĕ çинчи 12 армантан 7 арманĕ нăрахăçа тухнă. Çакна пула колхозниксем арман шыраса 20-30 километр хушши кайнисем те сахал мар пулаççĕ. (П. Ком—в).

— Сывă юлăр, ачамсем! Арăм, эпĕ таврăниччен пĕчĕк ачи утакан пулсан, мана телефонограм ярса савăнтар.

— Ăçта тухса каян, аттем?

— Армана, тырă авăртма каятăп.

Хурланнӑ хыҫҫӑн

Иван Ара

— Иван пичче! И-ван пичче-е!!

Таҫта хыпаланать Иван пичче. Ӑна кӑшкӑраҫҫӗ. Вӑл илтмест.

— И-ива-ан пи-чче-е-е!!!

Ӑна пӗр хут татӑкӗ тытнӑ письмоносец ҫапла кӑшкӑрать.

— Якку тете, кӑшкӑр-ха ҫав Иван пиччене! манӑн сас ҫитмерӗ. Письмоносецран маларах пыракан Якку Иван пиччене кӑшкӑрса чарчӗ.

—Ӑҫта пит васкатӑн? Сана ав письмоносец кӑшкӑрать,—терӗ вӑл, ӑна хӑваласа ҫитсен.

— Пушта каятӑп-ҫке. Арӑм патне ҫыру ярас терӗм-ха.

— Арӑму ӑҫта тата?

— Вӑл ман больницара выртать. Кӑҫал йӗтем ҫинче куҫне хӑлчӑк кӗчӗ те ҫавӑнтанпа так-ки аптӑрататъ те аптӑрататъ. Тепӗр чухне ҫӗр ҫывӑрма памасть: кӑшкӑрать! Мӗн тӑвас тетӗн. Э-эй! кун сассине итлесе выртиччен, терӗм, тытрӑм та больницӑна леҫсе ятӑм. Хӑш чухне кичемленет пуль, тетӗп. Старикрен ҫыру илсен, ҫапах самай вӗт вӑл. Хырӑмӗнче ача та пурччӗ-ха, вӑхӑчӗ те ҫитсе пырать пуль ӗнтӗ.

— Больницара пулсан, хӑрамаллах мар ӗнтӗ,— терӗ Якку.—Унта куҫне те тӳрлетӗҫ, ачине те ҫураттарса ярӗҫ.

— Тем, ачасене йывӑр ҫуратать вӑл. Папаҫ карчӑкпа ҫуратнӑ чух йӑлт асапланса пӗтет вара. Хам та хӗрхенсе пӗтетӗп, куҫӑм ан куртӑр тесе, килтен тухса таратӑп. Э, кунта больницара ҫавха. Ӗнтӗ ку юлашки пулать пуль те-ха, ҫитет— сакӑр ача пулать вӗт.

— Тӑвӑр халь тепӗр саккӑрӗшне!

— И-ий, Якку ачам, хамӑр та ват еннелле сулӑнатпӑр ӗнтӗ, аллӑран иртетпӗр те.

Вӗсем чарӑннӑ тӗле письмоносец ҫитрӗ. Иван пичче патне телеграмма пур.

— Хамӑн вуласа парас мар-и?—терӗ Якку.

— Хам та эп. Халь пӗлтӗр кӑна шкул та вӗренсе тухнӑ та.

Иван пичче телеграммине хыпаланса вуласа тухрӗ. Унтан вӑл ҫак сӑмахсене ҫеҫ вуларӗ:— Прощай женою срочно".

Ӑҫтан ку телеграмма,—вӑл ӑна-кӑна асӑрхаса тӑмарӗ, тӳрех: больницӑран, тесех шутларӗ. Ҫавӑнпа ун куҫӗсем шывланчӗҫ. „Прощай" тенӗ сӑмах ун чӗрине ҫӗҫӗ кӗртсе лартрӗ.

— А-ах, пӗтрӗ иккен, пӗтрӗ,—ҫавӑнтах йӗрсе ячӗ Иван пичче.—Вилчӗ иккен. Вилчӗ.

Пикенсех йӗрет Иван пичче. Иртсе ҫӳрекенсем пурте ун патӗнче чарӑнса итлесҫӗ. Калаҫа-калаҫа улать сакӑр ача ашшӗ пулмалли старик. Ни йӗме, ни кулма пӗлмесҫӗ унпа пӗрле ытти ҫынсем. Вӗсенчен пӗри матуртараххи тупӑнчӗ. Вӑл пуҫӗнчи кепкине хӑпартса илчӗ те, лаша витине чуптарчӗ. Пӗр самантра мӗн пурне хатӗрлесе пачӗҫ, Иван пиччен—лар та кай! Вӑл колхозӑн лайӑх лашипе тепӗр сехетрен больницӑна вӗҫтерчӗ. Иван пиччен аллинчи лаша маттур юртать. Часах ак ҫитес ҫӗре ҫитет. Ҫапах, часах пулсан та, ҫак вӑхӑт хушшинче ҫур ӗмӗр пурӑнса иртерчӗ Иван пичче. Шухӑшӗпе ӑҫта кӑна кайса килмерӗ пуль вӑл. Арӑмӗпе ирттернӗ кун-ҫула пӗр вӗҫӗмсӗр аса илет, илет... пӗчӗк ача пек ӗсӗклет.

Больницӑна ҫитнӗ-ҫитмен шала кӗрсе кайрӗ. Арӑмне пӑрахса хӑварнӑ палата тӗлӗнче ӑна пӗр сестра ҫитсе чарчӗ.

Сестра сӑмах каласа ӗлкӗриччен вӑл калаҫса ячӗ.

— Ӑҫта ман арӑм?—ыйтрӗ Иван пичче. Сасси чӗтӗресе тухрӗ.

— Кам вӑл сан арӑму.

— Матрунь Алексеевна.

— Алексеева Матрена! Ӑна ӗнерех кӑларса янӑ. Ҫук вӑл пирӗн патӑрта.—Ҫук? Пӗлетӗп ҫуккине... Н-н-н... Кала-ха, хӗрӗм: Мӗнле вӑл вилчӗ. Мӗн каласа хӑварчӗ? Н-н-н... Ҫавӑнта ӗнтӗ вӑл халӗ?— аллипе тӑсса кӑтартрӗ Иван пичче, вилнӗ ҫынсене хумалли палата еннелле. Тӑсса кӑтартрӗ те, тӗлӗнсе кайнӑ сестран ответне кӗтмесӗрех, хӑвӑрттӑн вӑркӑнтарчӗ.

— Усӑр!—алӑка шаккарӗ пичче.—Юлашки хут пӑхса, юлашки хут чуптуса юлам. Ой, мӗнле вилчӗ-ши? Мӗн каласа хӑварчӗ-ши?

Пасӑрхи сестра ун патне чупса пычӗ:

— Итле-ха, гражданин!—терӗ вӑл,—мӗн кирлӗ м ара калаҫатӑн кунта эс?.

— Сӳпӗлтӗк!—терӗ ӑна хирӗҫ Иван пичче.— „Кирлӗ мара" калаҫатӑп, значит? Паллах, сана ним те мар вӑл. Шӗшлӗ ҫеҫ-ха эсӗ... ҫамрӑк. Акӑ, качча кайса кур-ха. Ҫичӗ ача амӑшӗ пул. Саккӑрмӗшне тунӑ чухне вилсе вырт. Хурланмӗ-и упӑшку саншӑн... макӑрмӗ-и? Арӑма хӗрхенсе хурланма, макӑрма пӗлмен упӑшка упӑшка та мар вӑл... Ой-й... Мӗнле вилчӗ? Кала-ха, хӗрӗм? Мӗн каласа хӑварчӗ.

—Тавтапуҫ тесе хӑварчӗ... Мӗншӗн макӑратӑн. Вилмен вӗт вӑл...

— Лашу вӗҫерӗнсе тарчӗ санӑн!—пӗр ача ҫитсе пӗлтерчӗ Иван пиччене. Пичче „мӑк-мак" тукаларӗ те шӑрӑхпа тарланӑ ӗнсине шӑлса илчӗ. Унтан, нимӗн калаҫса тӑмасӑр, лаши хыҫҫӑн чупрӗ. Чупрӗ-чупрӗ ҫитеймерӗ. Лаша аслӑ урамран пӑрӑнса пӗр переулока кӗрсе куҫран ҫухалчӗ. „Аха,—терӗ Иван пичче.—Ассӑр выльӑх мар-ха. Пӗркун килсен каҫ выртса тухнӑ Срошкин пуҫана патне кӗрет ӗнтӗ. Юрӗ".

Лаша чӑнах та Срошкин хапхи умне пырса чарӑнчӗ. Иван пичче ҫитнӗ ҫӗре Срошкин хӑй те лаша патне тухса тӑнӑ.

— Ой-й! Пĕтрĕм ĕнтĕ, пуçана!—терĕ Иван пичче.—Ĕлкĕреймерĕм. Пытарнă... Кăтартмарĕç. Телеграмне паян çеç пырса пачĕç...

— Паян çеç янăччĕ ăна,—терĕ Срошкин.—Ирхине çеç кайса ятăм.

— Эсĕ çырнă-им ăна? Больницаран мар-им?

— Эпĕ çав. Арăму кунта килчĕ те.

— Мĕн калатăн эсĕ?—чĕтревлĕ саспа ыйтрĕ Иван пичче.—Вилнĕ вĕт арăм. Сывпуллашма чĕннĕ вĕт эс мана...

Срошкин нимĕн ăнланмасăр хытса тăчĕ.

— Ăçта-ха телеграмма?—терĕ вăл.

Телеграмма çинчи „Прощай женою срочно" сăмахсене вуланă хыççăн пĕр хĕрелсе, пĕр шуралса илчĕ Срошкин.

— Тьфу!—терĕ вăл, ĕнсине кĕçĕтмесĕрех хыçса.—Мĕнле пуçлă çынсем лараççĕ вăл почтăра? Ыйхă уçайманскерсем. Е мăшкăласшăн çапла тăваççĕ! „Приезжай за женою Срошкин" тесе çырнăччĕ эпĕ. А, вĕсем... Ман патра вĕт арăму. Атя, пуçана, атя пӳрте. Апат хатĕр унта.

...Пӳрте кĕрсенех Иван пичче умне хăй нихăçан курасса сунман картина тухса тăнă. Тĕрлĕ çимĕçлĕ сĕтел хушшинче унăн чун-чĕререн савакан арăмĕ Матрена Алексеевна ача ĕмĕртсе ларнă. Ача—калама çук чипер ача пулнă.

— Чунăм!—тесе алла илнĕ ăна Иван пичче.—Саккăрмĕш чунăм...

Çавăнтах вăл арăмне виçĕ хутчен тытса чуптунă. Арăмĕ ăна больницăра хăйне епле лайăх пăхни çинчен, куçне те часах тӳрлетни çинчен, ачана çавтери çăмăллăн çуратни çинчен хавасланса каласа панă.

— Тем пекех тавтапуç!—тенĕ Иван пичче.—Чим-ха, больницарисене кайса тав тăвам-ха. Хам та тав тăвам...

Вара вăл тав тума тухса кайнă. Унăн шухăшĕнче саккăрмĕш ачи тата çав ачана çуратма пулăшакан паçăрхи сестра çап-çутă сăнлăн ялкăшса тăнă.

Квас сутнă çĕрте



ИЛЕКЕННИСЕМ: Квас пур-и?

СУТАКАННИ: Ан асăнăр ун çинчен, атту хамăн та ĕçес килнипе пыр кăтăкланать.

Пальто

Митта Петӗрӗ

Сехет тӑххӑр танлаттарнӑ.

— Эх-и-ик!—тенӗ Эрхип.—Мӗншӗн вӑратмастӑн?

Ку сӑмахсене куҫне уҫмасӑрах каланӑ вӑл, каркаланса анасланӑ май каланӑ. Унтан каллех:

— Эхи ...хи-ик!—тенӗ.—Мӗншӗн халӗ те вӑратмастӑн?!

Ӑна хирӗҫ никам та нимӗн те чӗнмен. Пӗр ӑнланусӑр сасӑ ҫеҫ илтӗннӗ. Вӑл сасӑ ура вӗҫне улитка пек хутланса выртнӑ кантӑрвӑрри тӗслӗ кушакӑн мӑрӑлтатӑвӗ пулнӑ. Вара Эрхип, тата активлӑнрах анасласа, хӑрах аллипе темӗскер хыпашлама пуҫланӑ:

— Пӑлюк, вӑранма вӑхӑт ҫитнӗ пулӗ?

Хирӗҫ нимӗнле ответ та пулман. Сасартӑк Эрхип, ҫунакан пирус пуҫӗпе ура тупанӗнчен такам пӗҫертнӗ пек, одеялне йӑлт-ялт сирсе пӑрахнӑ, икӗ куҫне пӗр харӑссӑн чӑлт-чалт уҫӑлтарнӑ:

— Ӑҫта Пӑлюк?! (Ҫумра пулма кирлӗ Пӑлюка вӑл хыпашланӑ).

Пӳлӗм алакӗ уҫӑлнӑ. Пӗчӗкҫӗ ача, асламӗшпе пӗрле паҫӑрах ирхи апат ҫисе тӑраннӑ ача, пӗчӗкҫӗ автомобиль туртса тухнӑ. Эрхип ун ҫине пӑхса йӑл-йӑл кулнӑ. „Хам пекех,—шухӑшланӑ вӑл.—Тӑп-тӑваткӑл питлӗ, хуп-хура куҫ харшиллӗ... Ӑҫтан пулма пӗлнӗ... Анну ӑҫта?“

Ача чӗнмен. Пӳлӗмрен унӑн асламӑшӗ ҫатмари йӑтса тухнӑ.

— Икерчӗ писнӗ-им?—ыйтнӑ Эрхип.

— Писнӗ-ҫке. Юлашки ҫатма ав шаритлеҫет.

— Ӑҫта Пӑлюк?

— Паҫӑрах ӗҫе кайрӗ вӑл.

— Мӗншӗн мана вӑратман?

— Вӑратман?.. Саккӑртах вӑратма пуҫланӑ сана... Ҫур сехет хушши лӑкарӗ. Тӑмастӑн та ху.

— Мӗнле-ха тӑмастӑп пулать вӑл?.. Как я имею право тӑмасӑр выртма,—хӑй ӗҫлекен учреждениири сӑмахсемпе калаҫма пуҫларӗ Эрхип (пӗр учрежденинче бухгалтер пекки пулса ӗҫлет вӑл).—Как так! Как же я вӑхӑтра тӑман!

— Тӑмарӑн ҫав,—терӗ ҫатмаврилле амӑшӗ.—Чирлӗ вӗт эпӗ, терӗн.

Ну, конечно чирлӗ,—терӗ Эрхип, ҫамкине тытса.—Температура! Пар-ха градусник?..Ҫук. Ан пар. Больницӑна каятӑп.

— Каях, ара, та... Ҫисех каятӑн пулӗ.

— Как так! Больницӑна как можно ҫисе кайма!—сехет йӗппи ҫине тепӗр хут сиввӗн пӑхса илчӗ те Эрхип, темӗнле хӑватлӑ вӑй тӗртсе кӑларнӑ пекех, тухса сирпӗнчӗ.

* * *

— Ну-и ыратать!—терӗ Эрхип, больницӑна пырса кӗрсенех.

— Мӗн ыратать? Хӑш доктор патне килнӗ эс?—ыйтрӗ регистратор.

— Хӑш доктор патне? Хӑшӗн патне... Ну, Михаил Аркадьич патне ҫырса пар. Вӑл пӗлекен ҫын... Знакомый...

— Шӑл ыратать апла сан? Шӑл докторӗ кирлӗ...

— Ҫук! ҫук!—терӗ Эрхип.—Шӑл ыратни ерунда вӑл. Уншӑн мар эп. Ну, ҫырса пар эппин Виссарион Михайлыч патне. Паллатӑп ӑна эп.

— Юрать,—терӗ регистратор.—Ҫӑпан тухнӑ, значит. Ҫӑпанпа аптӑратӑн...

— Ҫук, эсӗ ан кул юлташ! Ерундалла ан калаҫ. Кунта санпа калаҫса кун каҫма вӑхӑт ҫук ман. Ӗҫе васкамалла. Прогул пулма пултарать. Пӗлетӗн, прогулшӑн халӗ мӗн тунине... Ҫырса пар мана Анна Васильевна патне?

— Аташатӑн эс, гражданин,—терӗ регистратор —Анна Васильевна вообще вӑл арҫынсене йышӑнмасть. Ача ҫураттараканни вӗт. Арӑму валли кирлӗ-и мӗн?

— Ан кул арӑмран, право на это не имеешь!—терӗ Эрхип.—Арӑм сан пек мар вӑл. Вӑл паҫӑрах ӗҫе тухса кайнӑ...

— Кала эс, мӗн ыратать?

— Температура!—терӗ Эрхип.

— Паҫӑрах ҫапла каламалла,—килӗшрӗ регистратор.—Хӑш доктор патне кӗмеллине каланӑ хыҫҫӑн хут ҫырса вӑл Эрхипе тыттарчӗ.—Пальтона хывса хӑварас пулать.

Пальтона хыврӗ Эрхип. Хыврӗ те, ӑна ҫакса хунӑ чухне, темшӗн, сасартӑк тӗлӗнсе чӗтреме пуҫларӗ. „Камӑн? Мӗнле пальто ку? Ӑҫтан мана ҫакланма пултарнӑ?“—ҫак ыйтуллӑ шухӑшсем умлӑн-хыҫлӑн пӑлханчӗҫ унӑн пуҫӗнче. Унтан тӳммисене тытса пӑхрӗ. Пур кӑсйисене те хыпашларӗ. Пӗр кӑсйинчен ҫӗтӗк-ҫатӑк блокнот пекскер тухрӗ. Ӑна страница хыҫҫӑн страница уҫса вулама пуҫларӗ. Пуринчен ытла пӗр страница ҫинчи сӑмахсем тӗлӗнтерчӗҫ Эрхипе, ҫанҫурӑмне ҫӳҫентерчӗҫ, нихҫанхинчен ытларах шиклентерчӗҫ. Унтан вӑл, регистратор ҫине тинкерӳллӗн пӑхса;

— Телефон пури сирӗн?!—тесе чӗтревлӗ ыйтрӗ.

— Пур-ҫке,—терӗ лешӗ.—Авӑ, стена ҫумӗнчен...

Телефон трубкине ярса тытрӗ Эрхип. Хӑй ӗҫлекен учреждении пуҫлӑхне чӗнсе илчӗ:

— Итле-ха, начальник тусăм!.. Аха-а... Эпĕ калаçатăп. Мĕскер? Прогульщик?! Эпĕ-и? Итле-ха,— итле. Акă, калатăп. Ĕнер каç пуçана патĕнче пултăмăр вĕт-ха... Вара çав, эсĕ, закуска начартарах тесе иртерех тухса кайрăн. Кайран та чылай ларнă эпир. Ятлаçма та пуçланă. Чаракан пулман. Çапкаланă мана. Халĕ ак больницаран эп...Çук. Уншăн çеç мар...Милици патне кĕмеллеха манăн... Мĕншĕн? То-тă. Питĕ секретно. Мана вĕлересшĕн пулнă...Кам? Ăна кайран калăп. Питĕ секретно. Акă мĕн çырать вăл мана вĕлерме хатĕрленнĕ план çинче. Ку плана эп пальто кăсйинчи блокнот çинчен тупрăм. Пальтоне-и? Пальтоне те тăпăлтарса илтĕм. Халĕ милицине кайса паратăп. Акă мĕн çырать вăл: „...Сана-и?... Сана тивместĕп... Вĕлеретĕп... Хама пăхăнакансене эп ĕмĕрлĕхе ырлăх кӳретĕп. А, хама курăймансене? Ой-й... Вĕсене-и?!... Манран çынсем кăна мар вĕт, сĕм вăрманта çĕр çулхи хырсем хăраса тăраççĕ...“ То-тă. Малалла татах та хăрушă. Вот, юлташ начальник, мĕнле тискер кайăксем пирĕн хушăра. А-а? Халех... Халех милицине каятăп. Конечно... Çавăншăн, конечно, паян вăхăтра ĕçе пыраймарăм. Ну-да... Прогул мар, конечно...

Телефонлă калаçу пĕтрĕ. Эрхип, никам çине пăхмасăр-тумасăр, ют пальтона тăхăнчĕ те пĕтĕм „чирĕ“ çинчен манса, больницăран тухса вĕçтерчĕ.

Милицисен уйрăмне пырса кĕрес чух ăна хирĕç унпала ĕнер каç ятлаçнă юлташĕ пынине курчĕ.

— Сана эп иртенпе шыратăп,—терĕ юлташĕ.

— Мĕн тăватăн манпа?

— Пĕлместĕн-им, пальтосем улшăннă вĕт? Акă ку санăн,—хывса пачĕ юлташĕ хăй çийĕнчи пальтоне.—Вот мур илешшĕ. Пĕлми пуличчен... ĕçнĕ пулать...

— Пĕлми пуличчен... Эпĕ пĕлетĕп эсĕ камне, терĕ Эрхип.

— Пĕлетĕн пулмасăр, артист вĕт эпĕ, каçхинех паллаштартăм.

— А, ку мĕн, ку?—кăшкăрса пăрахрĕ Эрхип, аллинчи блокнота артист сăмси тĕлне тытса.— Кама вĕлересшĕн эс? Бандит вĕт эс!? А-а? Кама вĕлерме план туса хунă эс ку блокнот çине?

Артист сасартăк ахăлтатса кулса ярасшăн пулчĕ, çавăнтах тата хăй аванмарланчĕ.

— Йăнăшатăн эс, юлташăм,—терĕ вăл, ăнлантарасшăн тăрăшса.—Рольте вылямалли алçырăвĕ вăл манăн. Акă, тепĕр эрнеренех эс çав блокнот çинчи сăмахсене театрта, сцена çинче илтме пултаратăн...

Пĕр сехете яхăн калаçнă хыççăн Эрхип ăнланчĕ. Пальтосене вара вĕсем улăштарчĕç. Кĕçĕр каллех пĕрле тулли кĕрекере пулма калаçса татăлчĕç.

* * *

Йăлтах тĕрĕс мар ку, тейĕ вулакан. Ененмĕ. Хам та ĕненесшĕн марччĕ. Анчах факт вĕт, нимĕн те тăваймăн. Нумай пулмасть Сĕнтĕрвăрринче пулса иртнĕ ĕç çинчен пулчĕ ку сăмах.

Первомайскра

Призывниксем Хĕрлĕ Çара кайиччен пурте Оборона значокĕсем илме тăрăшаççĕ. Анчах Первомайскри осоавиахим райсовечĕн председателĕ Павлов: „Эсир пурпĕрех пурте значоксем илейрес çук“ тесе ĕçре кансĕрлесе пырать.



ПАВЛОВ: Ан тыт винтовкăна! Тен эсĕ Хĕрлĕ Çар ретне те юрăхлă пулас çук...

Çĕнĕ услови

— Кăçал сирĕн колхоз тырпул тухăçĕшĕн пĕлтĕрхинчен ытларах кĕрешни палăрать. Ав çум çумлама пĕлтĕр тухман арăмсем те кар тăрса тухнă. Ма вăл?

— Ара кăçал пирĕн колхоз, ытти колхозсем пекех, тырпул тухăçĕшĕн кĕрешмелли çĕнĕ услови туянса хучĕ.

— Мĕнле йышши услови?

— „Колхоз çĕрĕсене салатса пĕтерессинчен сыхламалли мерăсем çинчен“ йышăннă постановлени.

— Ăçта каятăн, инке?

— Çак ачасен ашшĕне шырма каятăп, инкем. Çак предприятинче ĕçлет терĕçĕ те ăна. Тен эсĕ те пĕлетĕн—Иванов Кирил Ефремович текенскер.

— Çук. Вăл... Вăл манăн упăшка...

ТАНТӐШСЕНЕ

Ухсай Якӑвӗ

Ҫырать сӑвӑ та поэма.
„Ман пек сӑвӑҫ урӑх ҫук...“
Ҫавӑнпах та пуль ун умӗн
Шӑпӑрне калать Кӗлпук.

Ӳслӗк евӗр хӑйлатать те
Ӑйлатать шӑпӑр хӑмпи;
Ансӑртран хӑмпи шӑтать-тӗк,
Мӗнпе вылӗ-ши Кӗлпук?

Митта Петӗрӗ

Ун пур „Сахрун калавӗ“, „Хӗр калавӗ“,
„Матрос калавӗ“ те пур ун.
Хӑҫан пулӗ ун хӑйӗн калавӗ?
Вулӗччӗҫ: хӗр, матрос, Сахрун.

Александр Алка

... Эп илтнӗччӗ юмах.
Шутларӑм халӗ эп ӑна
Сӑвва-юрра хума.
(А. Алка, „Шыварманӗ“)

Те Сӑр, те Атӑл хӗрринче
Эп илтнӗччӗ юмах.
Пӗр шыв арманӗ умӗнче
Сар хӗр тухрӗ умма.

Хитре. Ун сӑнӗ сарӑ пит,
Ик куҫӗ—ик алка.
Ҫӳҫӗ—кӑлкан, ячӗ—Сарпи;
Ун пек ыр хӗр ҫуках...

Ӑна эп саврӑм чӗререн,
Юратрӑм ир те каҫ.
Хам савнӑран—эп ҫак хӗре
Парас, теп, мельника...

Иван Малгай

Пырса кур ман яла—эсӗ пулӑн хӑна,
Хӑнара эп сана хӑналатӑп кӑна.
Сӑвӑсем ҫинчен ҫеҫ ан пуҫла калаҫу,
Хӑнара ун ҫинчен эп пачах калас ҫук.
Эс пуҫла калаҫу: аяюк-каяюк,
Сӑввунта рифмӑсемсӗр пуҫне—маяюк.

Максим Ястран.

ВУЛАКАНСЕН ЖАЛОБИСЕМ.

Юлташӑм Капкӑн!

Пӗлетӗн-и пирӗн Вӑрнарта мӗнле лайӑх клуб пур иккенне? Пӗлетӗн, конешнӑ. А, пӗлетӗн-и ҫак лайӑх клубӑн пуҫлӑхӗ, Курбатов текенскер, мӗнле ӗҫленине? То-та, пӗлместӗн. Питӗ вайлӑ ӗҫлет вӑл. Клуба сӳрекен ҫынсен шучӗ кунсеренех чакса пытӑр тесе, клуб ҫумӗнчи драмкружокӑн ячӗ ҫеҫ тӑрса юлтӑр тесе, ҫак Курбатов юлашки вӑхӑтра сахал мар „ӗҫсем“ турӗ. Драмкружок членӗсем валли ятарласа ҫӗленӗ тумтир пурӗ 15000 тенкӗлӗх (вунпилӗк пин!) пӗр йӗрсӗр-мӗнсӗр ҫухалчӗ! Акӑ мӗнле ӗҫлет Курбатов. То-то, халӗ ӗнтӗ пӗлетӗн.

Салампа **Д. Обов.**

Тусӑм Капкӑн!

Пирӗн Ишлей райхаҫат редакцинче телефон аппарачӗ ҫук. Санпа калаҫас пулсан та, почта уйрӑмне чупса каятпӑр. Калаҫатпӑр та, ҫавӑнтах укҫа тӳлесе хӑваратпӑр. Капла яланах сире чӑрмантарма аванах мар вӗт, тетпӗр эпир ҫыхӑну пайӗн пуҫлӑхӗ Филиппов юлташа. Ан манӑр-ха, пирӗн редакцине те телефон аппарачӗ лартса парӑр-ха, тетпӗр. „Манмастпӑр, сире асрах тытатпӑр-ха-та“ тет Филиппов. Ҫав „асрах тытнӑран“ пулӗ ӗнтӗ эпир июнӗн 19-мӗшӗнче ҫакнашкал хут илтӗмӗр:

„Редакция райгазеты.

Ишлейский райисполком настоящим предупреждает и обязывает Вас до 15 июня с. г. погасить числящуюся за Вами задолженность за услуги связи в сумме 57 руб.

.. Задолжившиеся за услуги связи в течение 5-ти дней аппарат выключается, а на 6-й день невносившихся задолженности аппараты будут сниматься.

По этому предлагаем имеющихся задолженностей ликвидировать и внести авансы на следующие месяца к 23 июня 1939 года.

Пред. РИК“а Херсонов
Нач. контора связи Филиппов
Ст. бухалтер Иванов.

Ҫапла хӑратаҫҫӗ пире ҫак виҫӗ ҫын—виҫҫӗшӗ те хӑшӗ, хӗрлӗ, хӑшӗ симӗс, хӑшӗ кӑвак кӑранташпа алӑ пусма юратакансем. Хамсӑрӑнах хама авлантарнӑ тенӗ пек, ҫук аппарата пур тӑваҫҫӗ. Пур тунипе ҫеҫ мар-ха, уншӑн укҫа ыйтаҫҫӗ. Ыйтӑҫин! Кашни ыйтакана парсан, мӗнле-ха вара вӑл?.

Телефонсӑр саламра **Г. Щербаков.**

Секретарь и вып. редактор П. Е. МИТТА. **Зам. отв. редакт. В. Я. ЯКОВЛЕВ.**
Сдано в производство 5/VII-39 г. Подписано к печати 23/VII-39 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1757. Заказ № 405.
Формат бум. 58×84^1/8. Об'ем 2 п. л. Тираж 5800 экз. Изд. газ. „Чӑваш Коммунӗ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР.

М. Черемных ӳкерчĕкĕ („Безбожник“ журналтан)

Фашистсен парачĕ

Фельдфебель: Аçăрсен тата аслаçăрсен ăраскалĕпе хавхаланăр! Вĕçем капиталистсемшĕн геройла кĕрешсе пуç хуни сирĕншĕн чĕрĕ пример пулса тăрать. Сире те çавăн пек награда кĕтет.

Пĕр салтакĕ: Пĕлетпĕр мĕнле „награда“ кĕтнине,—йывăç хĕрес айне кĕрсе выртма йывăрах мар-тăр...